Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

73 (7390) № ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи сентябрĕн (авăн) 2-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**НЕФТЬ ТАТА ГАЗ ПРОМЫШЛЕННОÇĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Ыран – сирĕн професси уявĕ. Çак кунпа сире пурне те чун- чĕререн саламлатăп. Эсир кулленех çынсене савăнăç парнелетĕр. Сирĕн пархатарлă ĕçĕре пула ĕнтĕ паян районти 168 ялта çут çанталăк газĕ çунать. Кăçал кăна 90 килте «кăвак çулăм» çунма пуçларĕ. Пĕтĕмпе вара районĕпе çак ырлăхпа 10665 килте усă кураççĕ. Ял хуçалăхĕнчи, промышленноçри çитĕнӳсем, инфраструктура аталанăвĕ сирĕн ырми-канми ĕçĕрпе тӳрремĕнех çыхăннă. Газ пăрăхĕсене хунипе пĕрлех эсир вĕсене пăхса-тĕрĕслесех тăратăр. Сирĕн системăри тĕрлĕ службăсем талăкĕпех ĕçре. Эсир малашне те район аталанăвĕшĕн яваплăха туйса вăй хурассине шансах тăратăп.

Сире тăрăшуллă ĕçшĕн тав тăватăп. Малалла та çитĕнӳллĕ вăй хума çирĕп сывлăх, телей сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Октябрĕн 8-мĕшĕнче – ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ

***Августăн 30-мĕшĕнче район хаçачĕн редакцийĕнче ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйлама тăратнă кандидатсем тата кандидатсен списокĕсене регистрациленĕ суйлав пĕрлешĕвĕсем хушшинче райхаçатра тӳлевсĕр тата тӳлевлĕ йĕркепе суйлав умĕнхи агитаци материалĕсене вырнаçтарма шăпа туртнă. Унăн результачĕсем:***

**Тӳлевсĕр йĕркепе пичетлеме**

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче – “Родина”.
Сентябрĕн 13-мĕшĕнче – “Патриоты России”.
Сентябрĕн 27-мĕшĕнче – КПРФ.
Сентябрĕн 30-мĕшĕнче – “Единая Россия”
Октябрĕн 4-мĕшĕнче – ЛДПР.
Сентябрĕн 13-мĕшĕнче – Сергеев В.Н.
Сентябрĕн 16-мĕшĕнче – Фирсов В.П.
Сентябрĕн 20-мĕшĕнче – Андреев Е.Н.
Сентябрĕн 23-мĕшĕнче – Данилов В.Г.
Сентябрĕн 27-мĕшĕнче – Давыдов А.П.
Сентябрĕн 30-мĕшĕнче – Гордеев В.А.
Октябрĕн 4-мĕшĕнче – Анисимов В.И.

**Тӳлевлĕ йĕркепе пичетлеме**

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче – “Единая Россия”.
Сентябрĕн 30-мĕшĕнче – ЛДПР.
Октябрĕн 4-мĕшĕнче – КПРФ.
Сентябрĕн 23-мĕшĕнче – Анисимов В.И.
Сентябрĕн 27-мĕшĕнче – Данилов В.Г.
Сентябрĕн 30-мĕшĕнче – Давыдов А.П.
Октябрĕн 4-мĕшĕнче – Гордеев В.А.

Материалсене (çав шутра электронлă версисене те) пичете хатĕрлеме редакцие пĕр эрне малтан çитермелле.

**Райхаçат редакцийĕ.**

## Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ

# Ĕнер шкулсенче пĕрремĕш шăнкăрав янăрарĕ

**Муркаш шкулĕ.** Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта савăнăçлă линейка иртрĕ. Малтанах пухăннисене шкул директорĕ В.В. Ялушкин саламларĕ. Вăл çакна палăртрĕ. Шкул коллективĕн юлашки вăхăтри çитĕнĕвĕсем çук мар. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче шкул пĕтерекенсен 50 процентне яхăн аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕнĕ. Ытларахăшĕ – тӳлевсĕр мелпе. Техникумсемпе училищĕсенче малалла пĕлӳ пухакансем те сахал мар.





Шкулăн пурлăхпа техника бази пуянланса пырать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчен тытăнса кунта ĕçлеме тытăнакан çĕнĕ педагогсем те çук мар. Кусем вĕсем историе вĕрентекен Н.Ю. Гаврилова, физкультурăна вĕрентекен Р.И. Потапов, ют чĕлхесене вĕрентекен С.А. Данилова.

Пĕрремĕш класа 57 вĕренекен килет, вĕсем пĕрремĕш хут парта хушшине лараççĕ. Владислав Валентинович çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă май пурне те пĕлӳ тĕнчипе утакан çул çинче ӳсĕмсем, ăнăçусем сунчĕ.

Муркаш шкулĕнче вĕренекенсене, кунта вăй хуракан учительсене, ашшĕ-амăшĕсемпе пухăннисене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та саламларĕ.

– Вĕренӳ пĕлтерĕшĕ юлашки вăхăтра палăрмаллах ӳсрĕ,- терĕ вăл.- Ахальтен мар ĕнтĕ Пĕлӳ кунне патшалăх уявĕ туса хунă. Приоритетлă наци проекчĕсенчен пĕри те вĕрентĕве аталантарассипе çыхăннă.

Хальхипе малтанхи вĕрентӳ ĕçĕн шайне танлаштарма çук. Лайăх еннелле улшăнусем куçкĕрет. Интернет урлă кăна пĕтĕм тĕнче информацийĕпе паллашма, çĕнĕлĕхсене пĕлме май пур. Кунта вара тарăн пĕлӳсĕр май çук. Ку енĕпе Муркаш шкулĕн опыт çук мар. Ахальтен мар ĕнтĕ шкул иртнĕ çул итогĕсемпе шкулсен сайчĕсене йĕркелессипе республикăра виççĕмĕш вырăн йышăнма пултарнă.

Юрий Александрович вĕренекенсене малашне те пĕлӳ тĕнчипе çирĕп утăмлама ăнăçусем, вĕрентекенсене хăйсен пархатарлă ĕçĕнче çирĕп кăмăл, çитĕнӳсем сунчĕ.

Çавăн пекех пухăннисене Пĕлӳ кунĕ ячĕпе депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ В.Г. Данилов, Чăваш Республикин Гостехнадзор пуçлăхĕ В.П. Дмитриев, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин саламларĕç, малашне те ăнăçусем, ырлăх-сывлăх сунчĕç.

Муркаш почтамтчĕн пуçлăхĕ, шкулта вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен комитечĕн председателĕн çумĕ И.В. Павлова вĕренекенсемпе учительсене çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнипе саламланă май почтамт чи лайăх çыру çырассипе, почта услугисене пĕлессипе ирттернĕ конкурссенче мала тухнисене грамотăсемпе парнесем парса хавхалантарчĕ.

Муркаш шкулĕн ОБЖ учителĕ В.Г. Львов çамрăк моряксен республикăри ăмăртăвне хутшăнса лайăх кăтартусем тунă вĕренекенсене Хисеп грамотисем пачĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнипе çавăн пекех «Оринино» хуçалăх представителĕ О.В. Горшков саламларĕ, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин пĕрремĕш класа пыракансене «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн регион уйрăмĕнчен парнесем парса хавхалантарчĕ.

Акă, пĕрремĕш шăнкăрав янăрать. Шкул ачисене урока, пĕлӳ тĕнчипе утма йыхравлать вăл.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: пĕрремĕш хут пĕрремĕш класа; урок пуçланнине пĕлтерсе шăнкăрав янăрать.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Ĕç çи – 2006

**РАЙОНТИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ КĔРХИ УЙ-ХИР ĔÇĔСЕМ СЕНТЯБРĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсем çулнă тата вырнă. 2. Улăм пухса тирпейленĕ (процентпа). 3. Кашни гектар пуçне тивĕçекен тухăç (центнерпа). 4. Кĕрхи культурăсем акнă (процентпа). 5. Çĕртме сухи тунă (гектарпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 44 | 59 | 11 | 23 | 35 |
| “Волга” | 78 | 13 | 15 | 34 | 75 |
| “Восток» | 100 | 100 | 23 | 100 | 120 |
| «Герой” | 94 | 40 | 16 | 0 | 30 |
| ЗАО “Агро-Урожай” | 100 | 100 | 19 | 0 | |
| К. Иванов яч. хис. | 49 | 56 | 11 | 13 | 32 |
| Ильич яч. хис. | 80 | 70 | 21 | 44 | |
| “Колос” | 26 | 0 | 11 | 0 | |
| Ленин яч. хис. | 46 | 37 | 16 | 53 | 110 |
| “Лидер” | 39 | 93 | 15 | 0 | 45 |
| “Нива” | 100 | 90 | 16 | 25 | |
| “Оринино” | 100 | 75 | 18 | 22 | 63 |
| “Передовик” | 71 | 9 | 10 | 0 | |
| “Свобода” | 79 | 83 | 20 | 40 | 130 |
| “Сеятель” | 53 | 60 | 15 | 0 | |
| Суворов яч. хис. | 76 | 26 | 19 | 18 | |
| ООО АФ “Рассвет” | 77 | 53 | 18 | 28 | 240 |
| ОАО АФ “Нива” | 62 | 37 | 10 | 0 | |
| “Ударник” | 83 | 57 | 22 | 43 | 120 |
| “Хлебороб” | 63 | 81 | 11 | 24 | |
| Чапаев яч. хис. | 72 | 46 | 18 | 30 | |
| «Чемеево» | 60 | 54 | 20 | 0 | |
| Чкалов яч. хис. | 65 | 78 | 18 | 140 | 30 |
| **Районĕпе** | **67** | **55** | **17** | **26** | **1030** |

## “АПК аталантарасси” наци проекчĕ

# 45 кун хушшинче ĕлкĕрĕр

“АПК аталантарасси” наци проекчĕ уйрăм хушма хуçалăха аталантарас ĕçре ял çыннине пысăк пулăшу парать. Паян районта пурăнакансене патшалăх паракан çак çăмăллăхпа усă курăр тесе агитацилени те вырăнлах мар, мĕншĕн тесен çакă чăннипех те усăллă иккенне халăх ăнланса илчĕ.

Паянхи куна çак çăмăллăхпа пирĕн районти 493 çын пурĕ 76 миллион та 305 пин тенкĕлĕх илчĕ.

Çакăн пирки аса илтерни вара ытлашши пулмĕ. Çак кредита маларах илекенсен унпа усă курнине çирĕплетекен документсем тăратмалли вăхăт вĕçленсе пырать. Çавăнпа та çак ĕçе вĕçлеме васкăр. Кредит илнĕ хыççăн унпа тĕллевлĕн усă курнине 45 кун хушшинче документсемпе çирĕплетмесен, патшалăх саплаштаракан сумма сирĕн счет çине куçмасть. Илнĕ кредит хăйне хăех ахаль 19 процентлă коммерци кредитне куçать. Çавăнпа та “АПК аталантарасси” наци проекчĕпе кредит илсен, 45 кун тухиччен, унпа тĕллевлĕн усă курнине çирĕплетекен документсене хăвăра кредит панă банка тăратăр. **Л. ПАВЛОВА.**

## Хушма вĕрентӳ

# Искусство шкулĕ вĕренме илет

***Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ çитсе те тăчĕ. Малашне вара ачасем уроксем хыççăн вăхăта усăллă ирттерĕç. Ку енĕпе районти искусство шкулĕ ырă ят çĕнсе илнĕ ĕнтĕ. Муркашри ачасем çеç мар, ытти шкулсенче вĕренекенсем те паян искусство шкулĕнче вĕренме пултараççĕ. Унăн подразделенийĕсем Кашмашра, Ярапайкассинче, Юнкăра, Москакассинче, Атапайĕнче, Тойкилтĕре юрра-ташша ăста ачасене пуçтараççĕ. Пурĕ 14 преподаватель вăй хураççĕ пулсан, 8-шĕ – Муркашри искусство шкулĕнче.***

***Мĕн чухлĕ ача вĕсенче пĕлӳ илет? Ку ыйту çине вара асăннă шкул директорĕ Г.М. АНИСОВА çапла хуравларĕ:***

– Пĕтĕмпе районĕпе 170 ача. Муркашри искусство шкулĕн виçĕ уйрăмĕнче вара – 83 ача.

**– Çав уйрăмсенче мĕн чухлĕ вĕренмелле?**

– Музыка уйрăмĕнче тĕрлĕ инструментсемпе выляма вĕрентеççĕ: фортепианопа 7 çул, гитарăпа, баянпа тата аккордеонпа – 5 çул. Çавăн пекех хореографи уйрăмне çӳрекенсен те 5 çул туптамалла хăйсен пĕлĕвне. Пĕтĕмĕшле эстетика уйрăмне çӳрекен кĕçĕн классенчи ачасем вара 3 çул вĕренеççĕ.

**– Кăçал искусство шкулне вĕренме кĕмелли условисем мĕнлерех?**

– Искусство шкулĕн уйрăмĕсенче вĕренмелли хак уйăхне – 100 тенкĕ. Унта 7-12 çулсенчи ачасене вĕренме илеççĕ. Вĕренме кĕмелли экзаменсене вара сентябрĕн 5 тата 7-мĕшĕсенче Муркашри искусство шкулĕнче 13 сехетрен пуçласа 16 сехетчен йышăнаççĕ. Адресĕ: Гагарин урамĕ, 10-а çурт. Тел.: 2-25-22.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Çырăнтару-2007**

**Çитес çул илсе тăма**

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2007 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ.**

**6 уйăха çырăнмалли хак – 148 тенкĕ те 26 пус.**

## Çул-йĕр тăвас ыйтупа

# Унччен ялсене тирпейлĕр

Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров Чăваш Республикин çулĕсене тăвассине вĕçлес енĕпе пурнăçламалли ĕçсем çинчен калакан Указа кăларнăранпа вăхăт эрне ытларах çеç иртрĕ. Йывăр лав вара тапранчĕ. Нумай шухăшлама чăннипех те вăхăт çук, мĕншĕн тесен çак задачăна 2 çулта вĕçлемелле. Мĕнрен пуçламалла ку ĕçе? Çак ыйту тавра калаçрĕç ĕнтĕ иртнĕ ытлари кун çул-йĕр тăвас енĕпе ирттернĕ канашлура. Унта ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, çул-йĕр тăвакан строительство организацийĕсем тата проектсем хатĕрлекен учрежденийĕсен ертӳçисем хутшăнчĕç.

– Чи малтанах çак виçĕ енпе тимлемелле: проектпа смета документчĕсене хатĕрлемелле, хăш ялсем патне халиччен çулсем хăпартнă – çавна пăхмалла тата паян çул тума ăçта пуçлама пулать – çакна палăртмалла,- терĕ канашлура район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов. – Çак ĕçре пирĕн пĕр-пĕринпе партнерла хутшăнусенче пулмалла.

Лартнă задачăна пурнăçлассинче çакă чăннипех пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ĕç калăпăшĕ вара пĕчĕк мар. Районти 177 ялтан 35 патне паян асфальтлă çул çук. Вĕсенчен 19 ял патне каякан çул пирки проектпа смета документчĕсене хатĕрлемен. Апла пулсан, Юрий Александрович калашле, ку ĕçе паянах пуçăнмалла. Ку пĕрремĕшĕ. Иккĕмĕшĕнчен, çĕр шăнма пуçличчен май пур таран ытларах ял патне çул хăпартса хăвармалла. Пусăрăннă хыççăн асфальт сарсан çулĕ те чăтăмлă пулĕ. Чăваш Республикин Президенчĕ те çул тăвас ыйтупа ирттернĕ канашлура асфальтлă çулсен шутне ӳстернипе пĕрлех пахалăха чи пирвайхи вырăна хумаллине палăртнă.

Кăçал çапла вара районти 12 ял патне пурĕ 16,2 километр тăршшĕ çул хăпартмалла.

Çакна палăртмалла. Çул тăвас ыйту халиччен те районта малтан пурнăçламалли тĕллевсенчен пĕри пулнă. Паян, акă, районта 9 ял патне пыракан çула тăвас ĕçсем пыраççĕ. 8,23 километр тăршшĕ пулать вăл. Вĕсем патне çул сарса пĕтерме кăна тата 35 миллион та 850 пин тенкĕ укçа кирлĕ. Канашлура район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В.Г. Никитин паян ĕç пыракан объектсенчи лару-тăрупа тĕплĕн паллаштарчĕ.

Паян ялсем патне асфальт çул сарма республика бюджетне çĕнĕрен пăхса тухса, çак тĕллевпе ытларах укçа-тенкĕ уйăрни те пуçланă ĕç варринче чарăнса лармассине пĕлтерет. Çав хушăрах ял тăрăхĕсенче те унта пурăнакансен ним тумасăр çул туса парасса кĕтсе лармаллине те пĕлтермест çакă. ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров тирпейсĕр ялсене çул туса парассине чи кая хăварассине палăртнă. Урамра пĕр çурт умĕнче 3 пĕрене йăваланса выртсан та сирĕн ял патне çул тăвас ыйту пысăк ыйтупа юлма пултарать. Каярахри вăхăта. Ялта йĕрке тăвиччен. Çавăнпа та канашлура район пуçлăхĕ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене ку тĕлĕшпе халăхпа ĕçлемеллине палăртсах каларĕ. Чăннипех, тĕнчипе урăх ниçта та çук пулĕ урамра ăпăр-тапăр йăваланса выртакан тĕслĕхсем.

Асăннă Указ паян кĕркунне-çуркунне пырса кĕреймелле мар çĕрте те асфальтлă çулсем тума çул уçса пачĕ. Ĕçе 2 сменăпа йĕркелемелле. 8 сехетрен пуçласа 17 сехетре ĕç пĕтерсен 2 çулта палăртни пурнăçланаймĕ, - терĕ канашлура район пуçлăхĕ. Унта вăл çакăн пек шухăша та каларĕ. Ăна та илсе кăтартас килет:

– Транспортпа пырса кĕме çук ялсенче пурăнакансем хăйсем унта пурăннишĕн айăплă мар вĕт. Унта та çынсем пурăнаççĕ, - терĕ канашлура Юрий Александрович.

Эппин, айтăр-ха хамăр ял патне асфальт çул сарса паччăр тесен, урамсене тирпейлер. Хамăр культурăллă çынсем иккенне кăтартар.

Вара такăр асфальтлă çулпа сирĕн ял патне автобус рейсĕсем уçăлассие те инçех пулмĕ.

Район пуçлăхĕ палăртнă пек, шăпах çакăнта ĕнтĕ ялсем патне çулсем сарассин пĕлтерĕшĕ. **Л. ТУКТИНА.**